26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
18
ШАМАТКУН
186(6423) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

Арми генералне ПОПОВА

Брянск фрончĕн çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, ДЕСНА юханшывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та çурçĕртен тата хĕвелтухăçĕнчен пĕр вăхăтрах пырса çапса, паян, сентябрĕн 17-мĕшĕнче, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, нимĕçсен çав юханшыв рубежĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ питех те кирлĕ пункчĕсене, промышленноçăн пысăк центрĕсене – БРЯНСК тата БЕЖИЦА хулисене тытса илнĕ.

БРЯНСКПА БЕЖИЦА хулисемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 339-мĕш, 110-мĕш, 707-мĕш, 95-мĕш, 299-мĕш, 134-мĕш пехотнăй дивизийĕсене çапса аркатнă.

Çапла вара, вăрманлă та шурлăхлă, каçма йывăр вырăн урлă аякран кайса çавăрса илмелли ăста маневр туса, Брянск фрончĕн çарĕсем нимĕçсен ДЕСНА юханшывĕ çинчи оборонине татах тепĕр вырăнтан шăтарса кĕчĕç.

ДЕСНА юханшывĕ урлă каçассишĕн тата БРЯНСКПА БЕЖИЦА хулисене тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн НАУМЕНКĂН летчикĕсем палăрчĕç.

Уйрăмах тата çаксем палăрчĕç:

АБАШЕВ подполковникăн 197-мĕш стрелковăй дивизийĕ, УКРАИНЕЦ полковникăн 323-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВОРОБЬЕВ полковникăн 4-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВАЛЮГИН полковникăн 273-мĕш стрелковăй дивизийĕ, УХОВ полковникăн 3-мĕш гвардейски истребительнăй авиаци дивизийĕ, ВОЕВОДИН полковникăн çĕрле çывăха вĕçекен бомбардировочнăй авиацин 313-мĕш дивизийĕ, МАМОНОВ полковникăн 277-мĕш инженернăй батальонĕ, ЛИСИН майорăн 140-мĕш инженерно-сапернăй батальонĕ, КОВЧУР подполковникăн 310-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, ДЗАИДЗЕ майорăн 74-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртас майпа ДЕСНА юханшывĕ урлă каçассишĕн тата БРЯНСКПА БЕЖИЦА хулисене ирĕке кăларассишĕн чаплăн çапăçнă соединенисемпе чаçсене çакăн пек ятсем парас:

„БРЯНСКИ“

197-мĕш стрелковăй дивизие,
323-мĕш стрелковăй дивизие,
3-мĕш гвардейски истребительнăй авиаци дивизине,
277-мĕш инженернăй батальона,
140-мĕш инженерно-сапернăй батальона;

„БЕЖИЦКИ“

4-мĕш стрелковăй дивизие,
273-мĕш стрелковăй дивизие,
313-мĕш çĕрле çывăха вĕçекен бомбардировăчнăй авиаци дивизине,
310-мĕш гвардейски минометнăй полка,
74-мĕш гвардейски минометнăй полка.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

197-мĕш Брянски стрелковăй дивизи,
323-мĕш Брянски стрелковăй дивизи,
3-мĕш гвардейски Брянски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
277-мĕш Брянски инженернăй батальон,
140-мĕш Брянски инженерно-сапернăй батальон,
4-мĕш Бежицки стрелковăй дивизи,
273-мĕш Бежицки стрелковăй дивизи,
313-мĕш Бежицки çĕрле çывăха вĕçекен бомбардировăчнăй авиаци дивизийĕ,
310-мĕш гвардейски Бежицки минометнăй полк,
74-мĕш гвардейски Бежицки минометнăй полк.

ДЕСНА шывĕ урлă ăнăçлă каçнăшăн арми командующине, çавăн пекех тата чапа тухнă соединенисемпе чаçсен командирĕсене СУВОРОВ орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 17-мĕшĕнче, 21 сехет те 30 минутăра пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ ДЕСНА шывĕ урлă ăнăçлă каçнă тата БРЯНСКПА БЕЖИЦА хулисене ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ДЕСНА шывĕ урлă каçассишĕн тата БРЯНСКПА БЕЖИЦА хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи çарсем, Хура тинĕс флочĕпе пĕрле, пилĕк кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн НОВОРОССИЙСК хулипе портне йышăнса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем, наступление çаплах вăйлатса пырса, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, РОМНЫ хулине, Черниговской облаçĕнчи НОСОВКА, ИЧНЯ ятлă район центрĕсене, Сумы облаçĕнчи ТАЛАЛАЕВКА, ГЛИНСК ятлă район центрĕсене йышăнса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 90 пункта ытла тытса илнĕ.

ПАВЛОГРАД хули енче пирĕн çарсем ăнăçлă наступление çаплах вăйлатса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — ЛОЗОВАЯ хулипе пысăк чугун çул узелĕ тата ОЛЕЙНИКИ, ТАРАСОВКА, ПАНЮТИНО, ДОМАХА, ОСАДЧИЙ, ХОРОШЕЕ, КОХАНОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем.

ЗАПОРОЖЬЕ тата МЕЛИТОПОЛЬ хулисем енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 18 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра—Запорожье облаçĕнчи ОСИПЕНКО район центрĕ (Осипенко хулинчен 14 километр çурçĕререхре) тата РОМАНКИ, ЕКАТЕРИНОВКА, ХВАЛИБОГОВКА, ВАРВАРОВКА, ЧАПАЕВКА, КОНСКИЕ РАЗДОРЫ, ГУСАРКА, БЕЛЬМАНКА, БЕРЕСТОВОЕ, ВЫБОЕВО, ТРОИЦКОЕ, НИКОЛАЕВКА, СТАРО-ПЕТРОВСК, НОВО-ПЕТРОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем.

ХАРЬКОВРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан пирĕн çарсем ВАЛКИ хулине йышăнса илнĕ, çавăн пекех тата МИНЬКОВКА, ГАВРИЛОВКА, ЕВДОКИМОВКА, КАРАВАН, СТАРОВЕРОВКА, ЛОГВИНЫ, ВЛАСОВКА, ШЛЯХОВАЯ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

БРЯНСКРАН кăнтăртарахра, Десна шывĕн хĕвеланăç хĕрринче, пирĕн çарсем, хăйсем йышăнса илнĕ вырăна аслăлатассишĕн ăнăçлăн çапăçса, НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ хулине йышăнса илнĕ.

РОСЛАВЛЬ тата БРЯНСК енĕс енче пирĕн çарсем, çаплах наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче. нимĕçсен 64 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 94 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи çарсем, хура тинĕс флочĕпе пĕрле, паян Новороссийск хулипе портне штурмласа йышăнса илнĕ. Темиçе кун каярах пирĕн çарсем, тăшманăн бетонран тунă хăватлă укреплениййĕсене çĕмĕрсе, Новороссийск хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та урамсенче çапăçма пуçланă. Çав вăхăтрах Хура тинĕс карапĕсем портра десант антарнă, çапла вара тăшмана тинĕс енчен пырса çапнă. 5 кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн Новороссийск хулине нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Новороссийскшăн пынă çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен 73-мĕш пехотнăй дивизине, 4-мĕшпе 101-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕсене, румынсен 4-мĕш горно-стрелковăй дивизине тата нимĕçсен тинĕс пехотин портри командисене аркатса тăкнă. Япаласен тата продовольствин пысăк склачĕсемпе боеприпассен склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Брянскран кăнтăртарахра пирĕн çарсем çак кунсенче темиçе тĕлте Десна шывĕ урлă каçнă та Новгород-Северский хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра çапăçма пуçланă. Десна шывĕн хĕвеланăç хĕрринче нимĕçсем малтанах оборона линийĕ туса хунă пулнă, ăна вĕсем «нимĕçсен хĕвелтухăçĕнчи валĕ» тесе ят панă. Çав юханшыв рубежĕнче нумай туса тултарнă опорнăй пунктсене, пуринчен те ытларах Новгород-Северский хулине, тăшманăн пысăк вăйĕсем хӳтĕлсе тăнă. Десна шывĕн хĕвеланăç енне каçнă совет соединенийĕсене нимĕçсем темĕн пекех каялла сирсе ывăтма хăтланнă. Пĕр чаçри боецсем ĕнерхи кун кăна тăшманăн 27 хаяр контратакине сирсе пăрахнă, 1500 çити гитлеровеца, 15 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппа пĕтерсе тăкнă. Совет çарĕсем, Десна шывĕн хĕвеланăç хĕрринче çирĕп плацдармсем тунă хыççăн, паян тăтăклă наступление кĕрсе кайнă та Новгород-Северский хулине çапăçса йышăнса илнĕ. Тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Пирĕн çарсем хĕçпăшалсемпе тĕрлĕ çар материалĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Киев енче пирĕн çарсем наступление çаплах вăйлатса пынă. Пирĕн наступлени туса пыракан çарсене тăшман чарма хăтланать, анчах та совет çарĕсем, çав тери хăвăртăн пыра- пыра çапса, нимĕçсене хĕвеланăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле сире-сире ывăтаççĕ. Пĕр соединени боецĕсем, паян тăтăклăн атакăласа, Ромны хулине йышăнса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем Носовка, Ичня, Талалаевка, Глинск ятлă район центрĕсене, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 90 ытла пункта йышăнса илнĕ. Кун каçиччен çапăçусенче нимĕçсен 20 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Нежин хулине йышăнса илнĕ чухне совет чаçĕсем 14 танк, 60 тупă (вĕсенчен вуниккĕшĕ инçене переннисем), минометсемпе пулеметсем, автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнĕ. Çавăн пекех боеприпассемпе продовольствин тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсен пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Павлоград хули енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса тата тăшмана хăваласа пырса, пĕр соединенин чаçĕсем Лозовая хулипе пысăк чугун çул узелне йышăнса илнĕ. Боеприпассен пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Пирĕн тепĕр соединени тăшман пехотин пĕр полкне çавăрса илнĕ те кун каçиччен нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç полкĕн командирĕн виллине тупнă. Трофейăсем тытса илнĕ Чылай гитлеровецсене тыткăна илнĕ.

* * *

Запорожье тата Мелитополь хулисем енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн хушăри оборона рубежне татнă та малалла куçса пырса, нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 11 танк тата 10 тупă пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр чаçри боецсем хăйсенчен нумай йышлăрах нимĕçсене флангран сасартăк пырса çапнă та вĕсене халăх пурăнакан пысăк пунктран хĕссе кăларнă. Советсен моторизованнăй тата кавалери чаçĕсем тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене татаççĕ те гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳреççĕ. Нимĕçсен тыткăна лекнĕ офицерĕсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен 17-мĕш танковăй дивизийĕ юлашки çапăçусенче, виллисемпе аманнисене шутласан, 6.500 салтакпа офицер çухатнă. Дивизире мĕн пурĕ те 16 танк кăна тăрса юлнă.

* * *

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Валки хулине йышăнса илнĕ. Вăйлă тĕреклетнĕ рубежран çапса кăларнă тăшман каялла чакать, çакăнта ăна пехотăпа танксен пысăк отрячĕсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем хӳтĕлесе пыраççĕ. Пĕр соединени боецĕсем, тăшмана хыçранах хăваласа пырса, нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 14 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 тупă персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пĕтĕмĕшпех юсавлă икĕ йывăр танк, бронетранспортер, 22 тупă тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Брянск енче пĕр соединени чаçĕсем Дятьково хулине йышăнса илнĕ хыççăн тăшмана çаплах малалла хăваласа пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Вăрманти çапăçусенче нимĕçсене йывăр çухатусем кӳнĕ. Пирĕн чаçсем ĕнер йышăнса илнĕ территори çинче кăна тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен икĕ пине çити виллине шутласа кăларнă. Нимĕçсенчен тĕрлĕ калибрлă 36 тупă, 22 миномет, 65 пулемет, артиллерин 9 складне тата продовольствин 5 складне тытса илнĕ. 150 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Киркенесрен çурçĕртерехре пирĕн самолетсен ушкăнĕ нимĕçсен 2 танкертан, 3 транспортран тата хуралти 22 карапран тăракан конвойне, 20 самолет-истребитель хӳтĕлесе пыраканскерне, атакăланă.

Пирĕн авиаци атакăласа нимĕçсен икĕ танкерне, хуралта пыракан икĕ карапне шыва путарнă, тăшманăн 13 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиаци 4 самолет çухатнă.

Унтан çав конвоя пирĕн карапсем атакăланă, вĕсем татах тепĕр икĕ транспорта путарнă.

Конвоя вăл Киркенес портне пырса кĕриччен ех аркатса пынă, Киркенес портĕнче пирĕн авиаци çĕрле пырса тапăнса тăшманăн татах темиçе суднине сиенленĕ.

* * *

Кировоград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юханшыв урлă хывнă чугун çул кĕперне сыхлакан тăшман гарнизонне хăюллăн тапăннă. Партизансем хуралта тăракан мадьяр салтакĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисем тарса пĕтнĕ. Кĕпере сирпĕнтерсе хăварнă. Урса кайнă нимĕç влаçĕсем партизансенчен тарса хăтăлнă мадьярсене пурне те персе пăрахнă.

Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлессине вăйлатсах пырар!

Оборонăн Государственный Комитечĕ «ССР Союзĕнчи граждансене пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен» йышăннă историллĕ постановление Сталин юлташ алă пусса кăларнăранпа паян шăпах икĕ çулталăк çитрĕ.

Çак вăхăт хушшинче миллионшар совет çыннисем—рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе интеллигентсем производствăра ĕçленĕ вăхăтрах тăван çĕршыва хӳтĕлемелли, ирсĕр тăшмана çĕнтермелли çар искусствине вĕренсе пычĕç. Большевиксен парти тата юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ тăрăшнипе всевобуч пункчĕсем чăннипех те Хĕрлĕ Çар валли паттăр резервсем массăллăн хатĕрлекен вучахсем пулса тăчĕç.

Икĕ çулталăк хушшинче Чăваш республикинчи всевобуч пункчĕсем те фронт валли пиншер боецсем хатĕрлерĕç. Республикăри всевобуч пункчĕсенче çар ĕçне вĕреннĕ хыççăн фронта кайнă çĕршер юлташсем халĕ фронтра, çапăçу вутĕнче хĕрсе пиçĕхнĕ боецсемпе çума-çумăн тăрса, паттăррăн çапăçаççĕ. Шупашкар хулинчи всевобуч пунктĕнче вĕреннĕ Нагасов хăйĕн пулемечĕпе нимĕçсен пысăк ушкăнĕн атакине пĕччен сирсе пăрахнă. Шупашкар всевобуч пунктĕнче вĕреннĕ Тененбаум, Торлевский тата ытти юлташсем те халĕ çар училищисенче совет офицерĕсем пулма вĕренеççĕ. Кун пек тĕслĕхсене вуншарăн илсе кăтартма пулать.

Республикăри всевобуч пункчĕсем юратнă çулпуçăн историллĕ кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, икĕ çулталăк хушшинче чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Шупашкар хулинчи, Етĕрне, Комсомольски, Елчĕк, Шăхасан районĕсенчи всевобуч пункчĕсем халăха çар ĕçне вĕрентес ĕçе уйрăмах лайăх йĕркелерĕç.

Анчах Элĕк, Сĕнтĕр, Чкаловски районсенчи всевобуч пункчĕсем халăха çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ-ха. Элĕк районĕнчи всевобуч пункчĕсенче, сăмахран, вĕренме çӳресси тата вĕренӳ пахалăхĕ пачах çителĕксĕр. Унта Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕрленекен боецсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне начар туса пыраççĕ. Халăха çар ĕçне вĕрентес ĕçшĕн пуринчен малтан ответ тытакансем—военкомат, ВКП(б) райкомĕ тата ВЛКСМ райкомĕ всевобуч пункчĕсенче йĕркелĕх тăвассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Республикăри чылай всевобуч пункчĕсенче июль уйăхĕнче пиллĕкмĕш черетри вĕренӳ пуçланчĕ. Анчах Сĕнтĕр районĕнче ку ĕçе халĕ те пуçăнман. Çавăн пекех Чкаловски, Куславкка, Кувакино районĕсенчи хăшпĕр всевобуч пункчĕсенче те занятисем пуçланман-ха.

Халăха çар ĕçне вĕрентес ĕçри мĕнпур чăрмавсемпе çитменлĕхсене халех çине тăрса пĕтерес пулать. Çар ĕçне вĕренес ĕç çине Элĕк, Сĕнтĕр тата Чкаловски районсенчи пек сӳрĕккĕн пăхни ан пултăр. Оборонăн Государственный Комитечĕ «ССР Союзĕнчи граждансене пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен» йышăннă постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Республикăри чылай всевобуч пункчĕсенче боецсене уйрăмшарăн вĕрентес вырăнне тӳрех отделенире, взводра çапăçма вĕрентес йăлана халĕ те пĕтермен-ха. Хăшпĕр вĕренӳ пункчĕсенче отделени командирĕсем тупса çитермен. Хăшпĕр районсенче халăха çар ĕçне вĕрентес енĕпе ВКП(б) райкомĕсен çарĕç отделĕсем, ВЛКСМ райкомĕсен çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕсем тата Осоавиахимпа физкультура организацийĕсем военкоматсене пулăшса пыни çук-ха.

Халăха çар ĕçне вĕрентес ĕçре боецсене политикăпа шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен тимлĕн хатĕрлесе çитермелле. Ку тĕлĕшпе партипе комсомол организацийĕсен всевобуч пункчĕсенче ĕçлеме политработниксем уйăрса памалла. Вĕсем всевобуч пункчĕсенче вĕренекен кашни боеца Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине, фронтри хыпарсемпе Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса памалла.

Коммунистсемпе комсомолецсем чăн-чăнах та всевобуч чĕринĕ пулса тăччăр. Тăшмана хĕвеланăçнелле хăвалакан, Совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара боевой резервсем пĕр вĕçĕмсĕр парса тăрар!

Лайăх ĕçлекен промартельсем

СĔНТĔР. (Хамăр корр.). Хĕрлĕ Çар çапăçу хирĕнче çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тунине промартельсенче ĕçлекенсем ĕç тухăçлăхĕпе хăвăртлăхне ӳстернипе ответлеççĕ. Шатраси артелĕнче корзинкасемсĕр пуçне çуна-урапасем тăваççĕ. Колхозсене сутмашкăн август уйăхĕнче 20 çуна тунă. Артель иртнĕ уйăхра планран ирттерсе 7 пин тенкĕ тупăш панă.

Матикассинчи «Кожевник» артель те лайăх ĕçлет. Вăл августри плана мĕнпур продукци енĕпе 198 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 156 процент тултарнă. Ата-пушмаксем планпа палăртнинчен темиçе хут ытларах юсанă. «Кожевник» артель халĕ пурĕ 12 тĕрлĕ продукци туса кăларать. Нумай пулмасть кунта шурă хром тума пуçланă. Хром пахалăхĕ начар мар.

— Сентябрь уйăхĕнче иртнĕ уйăхринчен лайăхрах ĕçлетпĕр, —тет «Кожевник» артель правленийĕн председателĕ Степан Иванов юлташ.

* * *

ВĂРМАР. Полина Осипенко ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артельте юлашки вăхăтра стахановецсен йышĕ чылай ӳсрĕ. Работница К. Табакова, Л. Смирнова юлташсем халĕ нормăна 250-шар процент ытла, М. Федорова, А. Васильева юлташсем 200 процент таран тултараççĕ. Коллектив тăрăшса ĕçленине пула артель çулталăкри плана срокчен вĕçлерĕ.

* * *

КУСЛАВККА. «Прогресс» артель коллективĕ çулталăкри плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 93 процент тултарнă. Сталин юлташ совет хулисене ирĕке кăларакан çарсене саламласа панă приказсем çине ответлесе, артельте ĕçлекенсем çулталăк планне октябрĕн 1-мĕшĕччен ирттерсе тултарма пулчĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕçе вăйлатмалла

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). «Комсомол» колхоз членĕсем мухтавлă воинсем валли 10 мăшăр çăм носки, 10 мăшăр çăм алшиш, «Прожектор» колхоз членĕсем 12 мăшăр çăм носки, 16 мăшăр алшиш, Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 19 мăшăр носки, 51 мăшăр перчетке, 4 тир, «Красное Сормово» колхоз членĕсем 13 мăшăр носки, 28 мăшăр алшиш пухса пачĕç.

Анчах, районĕпе илсен, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕç сӳрĕккĕн пырать. Паянхи кун тĕлне 116 мăшăр носки, 321 мăшăр алшиш, 24 тир, 5 килограмм çăм çеç пухнă. Чылай колхозсем («Герой», «Пинер», «Правда», «III Интернационал») юлашки 4 уйăх хушшинче пĕр ăшă япала та пухман.

Ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе районри комисси (председателĕ П. Петров) çителĕксĕр ĕçлет.

В. ВЕСЕЛОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем — ĕç организаторĕсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Янмурзино» колхозри коммунистсем уйăхри ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Вĕсем колхозниксене ĕçре организацилесе, ертсе пыраççĕ.

Колхоз председателĕ-коммунист П. Ефремов колхозниксемпе колхозницăсене Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ паттăр вăрçăсене саламласа панă приказсене, Информаци Бюровĕн оперативнăй сводкисене тăтăшах вуласа парать, тĕнчере пулса иртекен ĕçсем çинчен ăнлантарать.

Кунта кашни коммунист уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Колхоз счетоводĕ пулса ĕçлекен Ильин коммунист, кăнтăрла хăй ĕçне туса пĕтерсен, [illegible] ĕçсем пех итем çинче пулать. Вăл молотилкăпа авăн çапас ĕçе лайăх организациленĕ. Кунта кашни колхозник тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. «МК—1100» молотилка пĕр чарăнмасăр ĕçлет, икĕ сменăпа талăкра 22 тонна тырă çапса кăларать. Нормăпа—20 тонна çапмалла. Колхозниксем пурте нормăна тултарса ĕçлеççĕ.

Колхозра ытти ĕçсем те ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Колхоз кĕлте кÿрсе пĕтерет ĕнтĕ. Пĕтĕм тырпулран колхоз 50 процентне çапса пуçтарнă. Кĕлте кÿнĕ çĕрте В. Родионова, З. Михайлова, У. Егорова колхозницăсем 2 километртан кашни кун 15—20 урапа кĕлте турттарса, нормăна 150—200-шер процент тултараççĕ. Уборка пуçланнăранпа вĕсенчен кашниех 70—80 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Колхоз государствăна тырă пама икĕ хутчен вырăнти обоз организациленĕ, хатĕрлев пунктне пĕтĕмпе 100 центнер тырă леçнĕ. Ку ĕç çак кунсенчех вĕçленет. Государствăна пахча-çимĕçсем парса татнă.

«Янмурзино» колхоз кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе те вăйлатрĕ. Пĕтĕмпе 22 гектар сухаланă. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте комсомолецсемпе çамрăксем ĕçлеççĕ. П. Краснова çак ĕçре куллен икĕ норма тултарса пырать.

С. ШАДИН.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). «Трудовик» заводри пуçламĕш парторганизаци «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене вĕренме организациленĕ кружока коммунистсемпе пĕрле партире тăман рабочисем те çÿреççĕ. Вĕсен шутĕнче цех начальникĕсем, бригадирсем, мастерсем тата стахановецсем те пур.

Сталин юлташăн чаплă кĕнекине рабочисемпе инженерно-техника работникĕсем пысăк тимлĕхпе вĕренеççĕ. Занятисем ĕçре пĕрре йĕркеллĕн те чĕрĕ пулса иртеççĕ. Занятие ирттерекен ĕçсем хăйне шанса панă ĕçе тĕплĕн тĕпчени, фактсене тĕрĕс тата лайăх çыхăнтарса кăтартнипе, кружокра вĕренекенсем занятисене тĕплĕн хатĕрленсе пынипе килет.

Малтанхи занятие пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Ф. Павлов юлташ ирттерчĕ. Унта вăл Сталин юлташ «Отечественнăй аслă вăрçă çинчен» çырнă кĕнекине мĕн вĕрентнине каласа пачĕ. Уйрăмах Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхĕ çинчен, [illegible] çинчен калани тата пирĕн тыла [illegible] пахча продукци пама чĕнсе калани çинчен чарăнса тăчĕ. Ку тĕлĕшпе вăл вырăнти фактсемпе те чылай усă курчĕ. Сăмахран, завод коллективĕ июль уйăхĕнче программăна 100 процентчен тултарнă, çак вăхăтрах фанера тăвакан цех уйăхри плана 12 процент çеç тултарнă. Докладчик çак цех юлса пынин сăлтавĕсене [illegible]. Малашне çак ситменлĕхсене пĕтермеллине асăрхаттарчĕ. Доклад хыççăн чылай ыйтусем пулчĕç. Докладчик çак ыйтусене çине тивĕçлĕ ответ панă хыççăн кружока вĕренекенсем [illegible].

Иккĕмĕш заняти те йĕркеллĕн иртрĕ. Унта Сталин юлташăн 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх туса калан сăмахне вĕренчĕç. Занятие Ф. Павлов юлташ ирттерчĕ.

«Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене [illegible] кружок членĕсем [illegible].

Х. ЛИСИН.

Парти ретне ÿстерессишĕн тимлĕн ĕçлемелле

ÇАНАШ. Районри парторганизаци парти ретне çĕнĕ çынсем илес енĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Кăçалхи 7 уйăх çурă хушшинче—августăн 20-мĕшĕ тĕлне парти членне 16 çынна çеç, парти членĕн кандидатне 42 çынна илнĕ.

Ку тĕлĕшпе уйрăмах Асхвари, Кив Шелттемри, Аччари пуçламĕш парторганизацисем начар ĕçлеççĕ. Асхвари пуçламĕш организаци (секретарĕ Щипцова) парти членĕн кандидатне пĕр çынна, Кив Шелттемри пуçламĕш организаци (секретарĕ М. Львова) парти членĕн кандидатне пĕр çынна, парти членне 2 çынна илнĕ. Уполнаркомзагри пуçламĕш парторганизаци те (секретарĕ Якимов) пĕр çынна кандидата илнипех лăпланса ларнă.

Яманкассинчи пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ М. Зайцева) парти ретне илес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлет. Унта кăçал 6 çынна парти членĕн кандидачĕсене илнĕ. Вĕсен шутĕнче колхозри тимĕрçĕ, стахановец-машиновед Д. Михайлов, 1-мĕш бригадăн бригадирĕ И. Кондратьев, Игнатьева, Яковлев колхозниксем пур.

Çамрăк коммунистсем ялти политика тата хуçалăх ĕçĕсенче малта пыраççĕ, ĕççынисем хушшинче авторитетпа усă кураççĕ.

Парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе МТС-ри пуçламĕш парторганизаци малтанхи вăхăтра начар мар ĕçлетчĕ. 6 уйăх хушшинче унта 6 çынна парти членĕн кандидатне, пĕр çынна члена илнĕ. Парторганизаци секретарĕ пулса Павлов юлташ ĕçлеме пуçланăранпа ĕç начарланчĕ. Июльпе август уйăхĕсенче пĕр çынна та парти ретне илмен. Павлов юлташ коммунистсен пухăвĕсене вăхăтра ирттермест тата пуху протоколĕсене ВКП(б) райкомне вăхăтра тăратмасть.

ВКП(б) райкомĕпе пуçламĕш организаци секретарĕсен партие илес ĕçе тĕпрен вăйлатмалла.

В. ВЕСЕЛОВ.
(Хамăр корр.).

Республика уйхирĕсенче

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННА СОЦИАЛИЗМЛА АМĂРТУ СЕНТЯБРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Мисемĕш вырăн йышăннă
Вăрнар	1
Сĕнтĕрвăрри	2
Етĕрне	3
Канаш	4
Октябрьски	5
Шупашкар	6
Советски	7
Калинино	8
Вăрмар	9
Çĕрпÿ	10
Красноармейски	11
Куславкка	12
Йĕпреç	13
Шăхасан	14
Ишлей	15
Сĕнтĕр	16
Улатăр	17
Çĕмĕрле	18
Элĕк	19
Комсомольски	20
Тăвай	21
Хĕрлĕ Чутай	22
Первомайски	23
Кувакино	24
Шăмăршă	25
Елчĕк	26
Чкаловски	27
Пăрачкав	28

Амăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă Вăрнар районĕ сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли çулталăкри плана 74,4 процент тултарнă.

Кая юлнине хăçанччен тÿсмелле?

Йĕпреç райцентрĕнчи „Карл Маркс“ колхоз кĕрхи тырăсем халĕ те акса пĕтермен. Пĕтĕмпе 80 гектар акмалла пулсан, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне колхоз мĕн пурĕ те 23 гектар çеç акнă. Ака тунă çĕрте 10 лаша, 5 колхозник çеç ĕçлет. Вĕсем те пĕр сехет ĕçлеççĕ, тепĕр сехет канаççĕ. Ĕçе хĕвел кăнтăралла сулăнсан тухаççĕ те хĕвел аничченех пăрахса яла кĕреççĕ. Ĕç нормине тултарса ĕçлени пĕр кун та çук. Колхоз председателĕ Конов ĕç мĕнле пынипе пачах интересленмест, такам пырса акса парассине шанать.

Çавăн пекех авăн çапасси те. Мологилка çĕмрĕк. Тăпачăпа çапма куллен 30—35 колхозник тухма пултарать, анчах вĕсенчен нумайĕшĕ суту-илÿ туса çÿреççĕ, килти ĕççене ытларах тума пăхаççĕ. Сентябрĕн 6-мĕшĕнче авăн çапма 25—30 çын тухас вырăнне 6 çын çеç тухнă. Вĕсем те 572 килограмм çеç çапнă.

Колхоз тырă типĕтме авăн тутарса чылай ĕçкунĕ пĕтернĕ. Анчах унпа усă курмаççĕ. Авăн кăмакине шыв тулса ларнă.

П. КУРАКОВ.

Кĕрхи çĕртме тума тытăнман

КУСЛАВККА, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвасси вăрахăн пулса пырать. Планпа 7 пин гектар кĕрхи çĕртме тумалла пулсан, паянхи куна 387 гектар çеç сухаланă. Йĕршерти Тельман ячĕпе тăракан (председателĕ Герасимов), «Красный Волгарь» колхозсем ку ĕçе халĕ те тытăнман.

И. ПЕТРОВ.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕНЧЕ

«3-мĕш пятилетка» колхоз уборка ĕçĕсене районра пуринчен малтан вĕçлерĕ.

Августăн 10-мĕшĕ ку колхозшăн паллă кун пулса тăрать. Çав кун ĕнтĕ колхоза ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Пысăк награда колхозниксемпе колхозницăсене татах та ытларах хавхалантарнă. Вĕсем апатланнă вăхăтсенче: — Эпир чăнахах лайăх ĕçлетпĕр пулмалла. Пирĕн колхозăн ятне асăнма пуçларĕç,—тенĕ.

Кунта нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Пархатарлă ĕçĕн результачĕ куç умĕнче. Колхоз паянхи куна ыраш кĕлтисене пухса кĕртсе капана хывнă. Çак кунсенчех вăл çурхи тырăсене те капана хывса пĕтерет. Çав вăхăтрах авăн çапас ĕç те пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Районри «Коммунизмшăн» хаçат çинчи сводка тăрăх ку колхоз яланах пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрать. Государствăна тырă памалли плана вăл 80 процент ытла пурнăçланă. Колхозăн пур ĕçĕнче те А. Петрова юлташăн бригади малта пырать. Унăн бригади çĕрĕк-кунĕн тырă вырнă. А. Гаврилова, А. Прокопьева ватă колхозницăсем—фронтовиксен амăшĕсем тырă вырнă çĕрте кашни кунах нормăна 250—300-шер процент тултарса пынă. А. Прокопьева 65 çулта. Çамрăксем ун çинчен каласма тытăнсан:

— Мана ватă теме çук-ха. Халĕ 70— 80 çула çитнисем те хĕрсех ĕçлеççĕ,—тет вăл. Çавăн пекех колхозра П. Романова, М. Капитанова колхозницăсем те уйхир ĕçĕнче пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕ А. Данилов юлташ фронтран аманса килнĕренпех конюх пулса ĕçлет. Уборка вăхăтĕнче вăл тырă вырнă, кĕлте кÿнĕ. Халĕ хĕрсех авăн çапать. Хăйĕн ĕçне те тĕплĕн туса пырать.

Пĕр иккĕленмелли те çук «3-мĕш пятилетка» колхоз авăн çапас ĕçе ытти колхозсенчен малтан пĕтерет. Çавăншăн кĕрешеççĕ те ĕнтĕ кунти колхозниксемпе колхозницăсем. Çавăншăн тăрăшать колхоз председателĕ Лукина юлташ.

«Хавас» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) иртнĕ çулсенче уборка ĕçĕсенче кая юлнăччĕ. Кăçал вара вăл тырпул пухса кĕртес ĕçе кĕске вăхăтрах вĕçлерĕ. Августăн 27-мĕшĕ тĕлне уйри пур йышши культурăсене те пуçтарса капана хывнă. Паян-ыран авăн çапса пĕтереççĕ. Государствăна тырă парса татни эрне ытла ĕнтĕ. Çавăн пекех ытти парăмсене те парса татнă. Колхозри паллă стахановкăсем: Ф. Петрова, Н. Тихонова, звеньевод О. Сергеева юлташсем кулленхи нормăна 200-шер процент ытла тултарса ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Акă, А. Васильева, П. Платонова, Д. Сергеева колхозницăсем юлашки кунсенче авăн çапнă çĕрте нормăна икĕ-виçĕ хут ытларах тултараççĕ.

— Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар пĕр кун хушшинче вуншар хуласемпе çĕршер ялсене ирсĕр тăшман аллинчен ирĕке кăларать. Ку çĕнтерÿ пире татах та паттăррăнрах ĕçлеме хушать,—теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем.

Ф. МАЛЫШКИН.
КАНАШ.

Учительсемпе шкул ачисен пулăшăвĕ

Çуллахи каникул пуçлансанах республикăри пионерсемпе шкул ачисем колхозсен уйхирĕсенче ĕçлеме тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне 65.452 вĕренекен 1.516.248 ĕçкунĕ тунă. Уйрăмах Кувакино, Комсомольски, Октябрьски районсенче шкул ачисен отрячĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Кувакино районĕнчи Турдаково туллимар вăтам шкулĕнче (директорĕ Тихонова, ВЛКСМ организацин секретарĕ Афонин юлташсем) 65 вĕренекен 5.815 ĕçкунĕ тунă. Вăтамран шутласан, кашни ача пуçне 89-шар ĕçкунĕ тивет. Кунсăр пуçне 8 учитель 1.200 ĕçкунĕ тунă. Мишуково вăтам шкулĕнчи (директорĕ И. Юдина, ВЛКСМ организацин секретарĕ Шитаева юлташсем) 110 вĕренекен 5.983 ĕçкунĕ тунă. Комсомольское вăтам шкулĕнчи 29 ача (отряд руководителĕ Павлова юлташ) 1.646 ĕçкунĕ тунă.

Шупашкар, Красноармейски, Шăхасан, Октябрьски, Вăрмар, Тăвай районĕсенче шкул ачисене ĕçре учительсем хăйсем ертсе пынă. Çавна пула унти шкул ачисем колхоз производствинче кăтартуллăн ĕçленĕ. Тукайри туллимар вăтам шкулта (Октябрьски район) 3-мĕш класра вĕренекен пионерка Фаина Рискова ертсе пыракан 11 ачаллă отряд 79 гектар çинче 100 килограмм пучах пухнă. Вăрмар районĕнче пучахсем пухас тĕлĕшпе 32 отряд организациленĕ. Августăн 20-мĕшĕ тĕлне вĕсем 300 центнер пучах пухнă. Вăл шутра Хоруй шкулĕ 1.200 килограмм, Çĕнĕ Мăнтăр шкулĕ 1.500 килограмм пухнă. Çавăн пекех Шупашкар районĕнчи 1.840 ача кашни гектартан 50-шар килограмм пучах пухнă.

Çак фактсем шкул ачисем колхозсене пысăк пулăшу панине кăтартаççĕ.

Кунпа пĕрлех ялхуçалăх ĕçне начар хутшăнса ĕçлекен шкулсемпе учительсем те пулчĕç. Канашпа Шупашкар хулисенчи шкул ачисем заданисем илеймен пирки ĕçе вăхăтра тухмасăр тăнă. Çак хуласенче шкул ачисем мĕн чухлĕ ĕçленине тĕрĕс шута илсĕ пыман.

Шкул директорĕсемпе заведующийĕсен, пионер вожатăйĕсен уйхир ĕçĕнче стахановла ĕçленĕ шкул ачисен ĕçне тĕрĕс шута илмелле. Шкул ачисем хушшинче политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатса, аслă классенче вĕренÿ пуçланиччен—октябрĕн 1-мĕшĕччен шкул ачисене колхоз ĕçĕсене татах та активлăнрах хутшăнтармалла.

А. ТОКАРЕВ,
ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ялхуçалăх налогне тÿлесе татрĕç

Пирĕн ялсоветĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, тăван Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерÿсемпе хавхалланса, пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсемшĕн туса пыма тăрăшаççĕ. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татаççĕ. «Коминтерн» колхоз членĕ Иван Егоров ялхуçалăх налогне извещени иличченех парса татрĕ. Вăл страховка укçине те пĕтĕмпех панă.

Анна Вазикова, И. Сидоров, И. Кузнецов, А. Абросыкина, В. Вазикова тата ытти юлташсем те ялхуçалăх налогĕпе страховка укçине 1943 çулшăн пĕтĕмпех парса татрĕç.

Е. МИХАЙЛОВА,
Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар ялсоветĕнчи финагент.

Ют çĕршывсенче

Гоминданăн Центральнăй исполнительнăй комитечĕн XI пленумĕ

ЧУНЦИН, сентябрĕн 1[illegible]-мĕшĕ. (ТАСС). Гоминданăн Центральнăй исполнительнăй Комитечĕн XI-мĕш пленумĕн ларăвĕнче япаласен хакĕсене контрольлесе тăрас пирки решени йышăннă.

Китайăн нацилле правительствин организацилле структури çинчен калакан, 1931 çулти декабрĕн 30-мĕшĕнче йышăннă законăн чылай статьисене пленум улăштарма йышăннă.

Чан Кай-ши тухса каланă

ЧУНЦИН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Гоминдан Центральнăй исполнительнăй комитечĕн XI-мĕш пленумĕнче уçнă чухне Чан Кай-ши çапла каланă:

«Эпир çухату тунисене, юхăнса çитнисене пăхмасăр ултă çул хушши хирĕç тăнин тĕллевĕ—вăрçăра çиеле тухса, вăрçă пĕтнĕ хыççăн халăхсен виçĕ принципĕ çинче тытăнса тăракан çĕнĕ Китая туса хурасси пулать. Эпĕ сире шантарма пултаратăп,—тенĕ Чан Кай-ши,—ултă çул хушши паттăррăн кĕрешнĕ хыççăн пирĕн нацилле кризис иртсе кайрĕ, пирĕн государство никĕсĕ çирĕпленчĕ».

Вăрçă лару-тăрăвĕ çинче чарăнса тăрса, Чан Кай-ши çапла каланă: «Хальхи вăхăтра перспективăсем лайăх пулсан та, пирĕн хамăра лăплантарма кирлĕ мар. Юлашки вăхăтри вăрçă ĕçĕсене пăхса тухса тата Лăпкă океан çинчи вăрçă вăйланса пынине кура, эпĕ çапла калама хăятăп: пирĕн пĕтĕмĕшле çĕнтерÿ çак çулта пулать, ку çулта пулмасан, тепĕр çулталăкран килет».

Экономикăри йывăрлăхсем çинче чарăнса тăрса, Чан Кай-ши çапла каланă: Китайăн экономикăри йывăрлăхĕсем ÿссе пыраççĕ пулсан та, эпир экономикăри кризиса тÿссе ирттернĕ.

Чан Кай-ши юлашкинчен юхăннă Китая вăрçă хыççăн ура çине тăратас пирки тата Сун Ят-сенăн индустри планне пурнăçа кĕртесси çинчен чарăнса тăнă.

Пĕлтерÿ

Ыран, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) лекци пулать. Лекци теми: «Орелпа Харьков хулисене тытса илессишĕн пынă историллĕ çапăçусем—Хĕрлĕ Çар питĕ лайăх вĕренсе çитнин, унăн паттăрлăхĕн тата вăл ăста маневрсем тума пĕлнин тĕслĕхĕсем».

Лекцие лектор Кудрявцев юлташ вулать.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

Сентябрĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун çаслă илемлĕ

ВО ИМЯ РОДИНЫ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20 тата 22 сехетре.

Шупашкарти кинотеатрта

сентябрĕн 19-мĕшĕнче иккĕмĕш хут çĕнĕ программăпа çĕрлехи концерт пулать.
Пуçламĕшĕ 23 сехет те 30 минутăра.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМЗЕМĔН СĔНТĔРТИ МЕЖРАЙОННĂЙ КОЛХОЗ ШКУЛĔ

1943—44 çулхи вĕренÿ çулĕ умĕн колхоз ветфельдшерĕсем, животновод-бригадирĕсем тата счетоводĕсем пулас текенсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Колхоз ветфельдшерĕсен отделенийĕнче 10 уйăх вĕренмелле, животновод-бригадирсемпе счетоводсен отделенийĕнче 5 уйăх вĕренмелле.

Шкула 7 çул вĕреннисене илеççĕ.

Заявленисене çак сентябрь уйăхĕн 28-мĕш числиччен йышăнаççĕ.

Вĕренме пур отделенисенче те çитес октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Испытанисем сентябрь уйăхĕн 25-мĕшпе 28-мĕш числисем хушшинче пулса иртеççĕ.

Межрайоннăй колхоз шкулĕнче вĕренекенсене колхозсем хăйсен шучĕпе вĕрентеççĕ, вĕсем янă кашни вĕренекеншĕн уйăхсерен 120 тенкĕ укçа ярса тăраççĕ.

Вĕренме кĕме паракан заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: 1) вĕренме кайма райзо е колхоз панă удостоверени, 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) вĕренни çинчен калакан свидетельство, 4) сывлăх çинчен калакан справка.

Заявленипе документсем ямалли адрес çапла: Чувашская АССР, Сундырский район, дер. Кади-касы, директору Межрайонной колхозной школы.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ çакна пĕлтерет: САРАТОВРИ КОНСЕРВАТОРИ ÇУМĔНЧИ ОПЕРА СТУДИНЕ кĕмелли испытанисем кая юлса çитнисемшĕн çак сентябрь уйăхĕн 20-мĕшпе 22-мĕш числисем хушшинче пулаççĕ.

Мускаври 2-мĕш №-лĕ Витамин заводĕн Заготконторине шăлан çырли тĕлĕшпе ĕçлекен заготовительсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заводская, 43. Телефон 6—84.
2—1

ВСЕВОБУЧĂН ИКĔ ÇУЛТАЛĂКĔ

Оборонăн Государственный Комитечĕ ССР Союзĕнчи гражданссене пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен постановлени йышăннăранпа паян икĕ çулталăк тулчĕ. Шупашкар горвоенкомачĕн всевобуч пункчĕсем çак икĕ çулталăк хушшинче Хĕрлĕ Çар валли тĕрлĕ çар специальнăçĕсене пĕлекен боецсем—стрелоксем, пулеметчиксем, снайперсем, бронебойщиксем тата ыт. те чылай хатĕрлерĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ фронта кайса хăйсен паттăрлăхне, тăван çĕршыва хÿтĕлес ĕçре хăйсем Ленин—Сталин партине пĕтĕм чун-чĕререн парăнса кĕрешнине кăтартса пачĕç.

Водосветра ĕçленĕ рабочи Нагасов всевобучра вĕреннĕ хыççăн фронта кайнă. Унта вăл чаплă пулеметчик пулса тăнă. Нагасов юлташ хăйĕн пулемечĕпе нимĕçсен пысăк ушкăнĕн атакине пĕчченех сирсе пăрахнă. Хĕрÿллĕ çапăçура хăй те герой пек вилнĕ. Çавăн пекех Кутяшев, Топоренко фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç мухтавлăн кĕрешнĕ. Халĕ вĕсем аманнă пирки хăйсен производствине таврăннă; вĕсем час-часах всевобуч пунктне [illegible].

Всевобучăн пиллĕкмĕш черетне вĕçлеме хатĕрленнĕ май, çакна палăртмалла: Шупашкар хулинчи всевобуч пункчĕсем Хĕрлĕ Çар валли кадрсем хатĕрлес задачăна начар мар пурнăçласа пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах командирсемпе политработниксем тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленине палăртмалла.

Всевобуч пункчĕсем хăйсен ĕçне лайăхлатнăçемĕн лайăхлатса пычĕç. Пĕрремĕш черетре боецсем вĕренме çÿресси 78,3 процент çеç пулнă пулсан, пиллĕкмĕш черетре стрелковăй подразделенисене вĕренме çÿрекенсен хисепĕ 91 процента, спецподразделенисене вĕренме çÿрекенсен хисепĕ 98 процента çитрĕ. Çавăн пекех вĕренÿ пахалăхĕ те ÿссе пычĕ. Пĕрремĕш черетре «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕреннĕ боецсем 68 процент ытларах çеç шутланнă пулсан, тăваттăмĕш черетре вĕренекенсем: стрелоксенчен 74 процентĕ, спецподразделенисенче вĕренекенсенчен 82 процентĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

Боевой хĕçпăшалран пеме вĕренес тĕлĕшпе те ÿсĕмсем тунă. Пĕрремĕш черетре [illegible] вĕренекенсем 83 процент çеç пурнăçланă пулсан, тăваттăмĕш черетре вĕренсе тухнă стрелоксем задание 85 процент, спецподразделенисенче вĕренекенсем 89—91 процент пурнăçларĕç.

Пĕрремĕш черете вĕрентнĕ чухне боевой хĕçпăшал çителĕксĕрри ĕçе чăрмантарнă. Халĕ всевобуч пункчĕсенче боевой хĕçпăшал çителĕклех, вăл шутра снайпер винтовкисем те, станковăй пулеметсем те тата ыттисем те пур.

Всевобуч пункчĕсенче политикăллă-масăллă ĕç лайăхланчĕ. Ăна халĕ тĕрлĕ формăсемпе туса пыма тытăннă. Ку тĕлĕшпе Шупашкар хулинчи всевобуч пункчĕ (пункт начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ А. Студенецкий юлташ) уйрăмах палăрса тăрать.

Унта хальхи лару-тăру çинчен тата Совет Информаци бюровĕн оперативнăй сводкисене политинформацисенче тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Вĕренÿ программин уйрăм темисене, сăмахран, танксене хирĕç кĕрешесси çинчен, снайпер çапăçăвĕ çинчен т. ыт. те вĕреннĕ чухне отечественнăй аслă вăрçă участникĕсене чĕнеççĕ, вĕсен боевой опычĕпе паллаштараççĕ.

Всевобуч пункчĕсенче вĕренекен [illegible] боецсен фронтри [illegible] пекех всевобучран вĕренсе тухнă хыççăн çар училищисене кайнă курсантсемпе çырусем урлă таччăн çыхăннă.

Всевобуч пункчĕсенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе командирăн политика енĕпе заместитель пулса Крупский юлташ ĕçлекен подразделенире ĕç уйрăмах паха.

Всевобучăн клуб пур. Унта занятисем пуçланиччен тата канмă вăхăтра боецсем стена хаçачĕ, вырăнти е центрти хаçатсемпе журналсене вулама, шашкă-шахмăтла вылямa пултараççĕ.

Фото-хаçатсем те кăлараççĕ, кунсăр пуçне вĕренÿ программине лайăхрах ăнланма пулăшакан кинофильмсем кăтартаççĕ.

Çаксем вара боецсене çар ĕçне вĕрентес ĕçе ăнăçлăн туса пыма лайăх майсем пачĕç.

Нумай пулмасть спецподразделенире тĕрĕслÿ пулса иртрĕ. Шипунов юлташ командир пулса ĕçлекен подразделени лайăх результатсем кăтартрĕ.

Всевобуч боецĕсене сывлăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес енĕпе те чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Карновский тата Шипунов юлташсем командирсем пулса ĕçлекен подразделенисем [illegible] ГТО значокĕсем илме нормăсем пачĕç. Физкультурăпа спорт ĕçĕн хулари комитечĕ вĕсене нумай пулмасть значоксем пачĕ. ГТО значокĕсем илме нормăсем парасси ытти подразделенисенче те кĕçех вĕçленет.

Çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе туса ирттернĕ çак питех те пысăк ĕçре всевобуч пункчĕсенче чаплă командирсемпе политработниксем ÿссе çитĕнчĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ всевобуч пункчĕсенче çулталăк çурă е икĕ çул хушши ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Шупашкарти всевобуч пункчĕн начальникĕ-орденоносец М. Я. Саначин, подразделенисен командирĕсем — Шипунов, Шкловский, Бобровский, Панов тата ытти юлташсем тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Чапаевски поселокри всевобуч пункчĕн начальникĕ Платонов, штаб начальникĕ Векшин, подразделенисен командирĕсем Шепелев, Петухов, Демин юлташсем те лайăх ĕçлерĕç. Тĕп вĕренÿ пункчĕн начальникĕ Филиппов, подразделени командирĕ Багров юлташсем тата вĕренÿ пунктĕнче ĕçлеме нумай пулмасть явăçтарнă А. Студенецкипе Крупский юлташсем те мухтава тивĕç ĕçлеççĕ.

Лейтенант Б. МИХАЙЛОВ,
Шупашкар горвоенкомачĕн всевобуч енĕпе ĕçлекен старши инструкторĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—28, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—3—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 58 п. л.

НТ 371.